**П. Хусанкай**

# Пĕр чунлă, туслă тантăшсем

(Г. Тукайпа К. Иванов çинчен пуçа килнĕ шухăшсем)

Халăхсен историллĕ шăпи тĕрлĕ килсе тухать. Пĕтĕм этемлĕх культурин ылттăн-кĕмĕл çӳпçине кашни халăх хăй хăватне кура мул хывать. Анчах çакă паллă: пĕр-пĕр халăхăн ĕлĕк-авалтан пыракан нацилле хăй евĕрлĕхĕ çеç этемлĕхĕн пĕрлехи - интернациллĕ - ăс-хакăлĕпе ăсталăхне пуйтарма пултарать. Çакă малтан хирĕçлевлĕ пек туйăнакан шухăшăн хăйĕн диалектики пур. Ăна пĕтĕм тĕнче культурин аталанăвĕ чăнласа парать.

Гомерпа Данте, Руставелипе Навои, Низамипе Кăл Гали, Шекспирпа Сервантес, Пушкинпа Шевченко - ма çак ятсем пуриншĕн те хаклă-ха? Ма тесен кашни хăй халăхне çĕклекен пысăк пулăм пек çитнĕ вĕсем ку тарана, кашни хăй халăхĕн мухтавĕ пулнă.

Çак художниксем яланах хăй халăхĕ çинчен çырман (Шекспир) е асăнманпа пĕрех хăй халăхне (Руставели). Çапах вĕсем тĕпрен-тымартанах нациллескерсем, мĕншĕн тесен кашни хăй халăхĕн чĕлхипе çырнă.

Урăхларах та пулать: çыравçă, тĕрлĕ сăлтава пула, хăй халăхĕ çинчен тăван чĕлхипе мар е тăван чĕлхипе çеç те мар çырать. Çапла Коста Хета-гуров осетин, Иван Куратов коми, Каюм Насыри тутар, Спиридон Яндуш чăваш икĕ чĕлхепе те тан ĕçленĕ: тăван чĕлхепе тата вырăс чĕлхипе. (Эпĕ кунта союзлă республикăсем тунă халăхсен те çавнашкал тĕслĕх пайтах пулни çинчен каламастăп та ĕнтĕ). Çапла пирĕн саманара Азипе Африкăри хăш-пĕр çĕршыв литераторĕсем хăйсен халăхĕсем çинчен колонизаторсен чĕлхипе çыраççĕ. Колонизаторсем хăйсем пусмăрланă халăхсен культурине аталантарма юри чарса тăраççĕ.

Габдулла Тукай тутарпа Константин Иванов чăваш Раççейри малтанхи революцин хумĕ çинче халăхăмăрсем наци ирĕкĕшĕн кĕрешме çĕкленнĕ вăхăтра ӳссе аталаннă. Вĕсем революци вăратнă, унтан реакци хыттăн пусарнă тăванĕсен мал ĕмĕтлĕ шухăшĕсене туллин те витĕмлен кăтартса панă. Вĕсем пирĕн халăхсем çĕнĕрен чĕрĕлсе, наци тĕлĕшĕнчен çĕкленсе каяссине шанса ĕçленĕ. Çав чĕрĕлӳпе çĕкленĕвĕн тĕп никĕсне тăван чĕлхере курса, вĕсем ăна хăйсен пĕтĕм пултарулăхĕпе çирĕплетсе ĕнентернĕ.

Тукайпа Иванов çырнисем, халăхăмăрсен сăмах вĕççĕн çӳрекен пуян пултарулăхне çавăрса илсе, ăна тата та пуянлатса, сăвăрса-алласа тенĕ пек, халăха каялла тавăрса панă. Пысăк ăстасен вĕри хавхалану вучахĕнче çĕнĕрен

шăратса хывнă сăмах хаклă ылттăн-кĕмĕл пек çиççе-ялтăраса кайнă, Иванов каларăшле, „чĕрене пырса çапнă", халăхăмăрсем наци кăмăлне унччен нихçан пулман шая хăпартнă.

Иванов, Тукайран тăвата çул кĕçĕнскер, икĕ çул каярах çĕре кĕнĕскер, хăйпе пĕр шăпаллă тутар сăвăçине пĕлмен мар, тесе шухăшлама май пур. Вăл Пушкăртра çуралнă, ачаранах ашшĕ кӳршĕ тутарсемпе тутарла, пушкăртсемпе пушкăртла калаçнине итленĕ. Араб çыруне пĕлменскер, Тукай сăввисене вăл оригинал халлĕн вулайманах ĕнтĕ. Анчах тутар поэчĕн сăввисене халăхĕ сăмах вĕççĕн те сарнă: каланă та, юрланă та, хăй çинчен те халапланă. Çавсене пирĕн поэтăмăр илтме пултарнă. Тен, вăл Тукайăн Н. И. Ашмарин вырăсла куçарнă сăввисене те вулама пултарнă. Вĕсем 1914 çулта Мускаврa „Восточный сборник" ятлă кĕнекере тухнă (Лазарев Институчĕн Ĕçĕсем, 43-мĕш кĕнеке).

Нимĕнле вывод та тумасăр, пĕр кăсăк факта палăртас килет: Тукай та, Иванов та иккĕшĕ пĕр çултах (1911) вырăсларан „Çулталăк хушши" сăвва куçарса пичетленĕ. Иванов ăна 1912 çулшăн тухнă букваре кĕртнĕ, Тукай - „Кăмăл çимĕçĕсем" текен кĕнекене вырнаçтарнă.

Икĕ сăвăç та Пушкинпа Лермонтова тинкерсе сăнани - вĕсем хăйсен ĕçне вырăс поэзийĕн шедеврĕсемпе виçнине, çав аслă ăстасенчен çине тăрсах вĕреннине кăтартса парать.

Хам эпĕ Тукайпа чи малтан П. Радимов вырăсла куçарнă сăввисене вуласа паллашрăм. Кĕнеки „Татăлнă ĕмĕт" ятлăччĕ. Анчах нимрен ытла ăша вырнаçни - унăн чăвашла Чĕкеç Ç. (Хумма Çеменĕ) куçарнă „Поэт" ятлă сăвви пулчĕ. Вăл çирĕммĕш çулсен пуçламăшĕнчех çапăнса тухнă пек ас тăватăп. Эпĕ ăна халь те ăссăн пĕлетĕп. Пĕтĕм этемлĕхе юратса çырнă, таса та çутă кăмăллă реквием пек янрать ман асăмра çав сăввăн юлашки икĕ йĕрки:

Ывăç тăпри сапнă чух та каласа юлам: „Эсĕр юлтăр, эпир кайрăмăр!" - тесе юрлам.

Çав оптимизм, иксĕлми пĕр асла пурнăç пĕччен вилĕме яланах аяла туни, чĕмсĕрлĕхе чĕрĕлĕх çĕнтерсе пыни манăн ăс-хакăла нумай енчен çутатса янă пек туйăнчĕ. „Пултарулăх тени - ĕмĕр тăршĕне тӳлесе пымалли парăм, уншăн хама пĕтĕмпех пама та шел мар!" - тесе ăнлантăм эпĕ.

Тутарстанра çуралнăскер, эпĕ час-часах хам тăван ялпа ун таврашĕнчи ялсенче пулкалатăп. Пĕррехинче мана çакă сăвă савăнтарса тĕлĕнтерчĕ: колхоз правлени çурчĕн стени çинче Тукайпа Иванов сăнĕсем юнашарах çакăнса тăраççĕ

иккен! Ун çинчен эпĕ „Автанран автанччен" тенĕ лирикăлла поэмăра çапла çырсаттăм:

Унта, çав Ĕнчĕ хĕрринче,
Арча пек чыслă çĕн çуртра,
Эртеллĕ ĕçĕн штабĕнче
Эп пултăм çакă вăхăтра.

Пăхатăп пр стени çине -
Куратăп Иванов сăнне,
Пăхатăп эпĕ теприне -
Тукай тухать ман куç умне.

Пĕр чунлă, туслă тантăшсем,
Хальхи ял пуçĕсемпеле,
Авалхине çĕре чиксе
Канаш тăваççĕ-мĕн пĕрле.

Пĕр чунлă, туслă тантăшсем... Çавăнпа мар-и пĕртăван чĕлхеллĕ икĕ халăхра вĕсене лайăх пĕлсе тăраççĕ? Чăвашра Тукая юратса вулаççĕ, Тутарстанра Иванова ытараймаççĕ.

Трагедилле шăпаллă илемлĕ Нарспи ĕлĕкхи пурнăçра шариат танатине çакланнă тутар хĕрарăмне çывăх тăрать. „Шурале" хăйĕн халăхлăхĕпе, çутă пурнăça ĕненнипе, тăрăхласа кулнă шӳчĕпе чăваш чĕрине вырнаçать. Чăваш халăхĕн ĕçченлĕхĕ, авалтан пыракан тырă-пулă тăвас ăсталăхĕ, вăрман кăклас хевти, сунарçă-пулăçă чухлавĕ, тем пулсан та кулянма-хуçălма юратман кăмăлĕ, юлашки вăхăтрилле каласаи - унăн аптраманлăхĕ - çав тутар юмахĕнчи этем кăмăлне çывăх.

Чăваш халăхĕ, патша Раççейĕнче пусмăрта пурăннă ытти халăхсем пекех, Тукайăн çакă витĕмлĕ сăмахĕсене ăша илчĕ:

Эпир те вырăс çĕрĕнче хăварнă йĕр,
Кун-çулĕнче эпир - таса тĕкĕр...
Çапăçура - чăн тигăрпала пĕр,
Ĕçре тесен - утран ирттертĕмĕр.
Ма тивĕççĕр пулас-ха халăх çак?
Пĕр çĕршывра пĕр тивĕç пулмаллах!

Тукай ҫинчен Иванов тӳрремӗнех мӗн каланине е ҫырнине пӗлместпӗр эпир: поэтӑн пайтах алҫырӑвӗ пирӗн саманана ҫитеймен. Хусанти Тукай хӑйӗн шӑллӗ пек Чӗмпӗрти чӑваш сӑвӑҫи ҫинчен илтнипе илтменнине те калаймастпӑр. Анчах вӗсен шӑписем пӗрешкел: иккӗш те реакци вӑхӑчӗн тӳсме ҫук йывӑр кунӗсенче пурӑннӑ, иккӗш те хавхалану вӗри вучӗпе ҫунса кайнӑ, иккӗшне те ӳпке чирӗ ҫулса пӑрахнӑ. Патша Раҫҫейӗнче, чи лайӑх вырӑс ҫыннисем, хӑйсем чунне хайӑрттарсах, „халӑхсен тӗрми" тенӗ ҫӗршывра, нумай-нумай талантӑн шӑпи ҫавнашкал пулнӑ.

Халӗ ӗнтӗ ку чиртен ҫав тери аякра. Апла пулнине ӗненме ҫук пекех туйӑнать. Пирӗн халӑхсем пӗр-пӗрин культурине хисеплени, пӗр-пӗринпе интересленни, кашни нацин историллӗ шӑпине тарӑннӑн ӑнланни, малашнехи пӗрлӗх калчисене ҫине тӑрсах ӳстерме тӑрӑшни - акӑ мӗншӗн палӑрса тӑраҫҫӗ халӗ ҫӗршывӑмӑрти халӑхсем.

Халӑхсен культурисем пӗр-пӗринпе нихҫанхинчен те тачӑ хутшӑннӑ вӑхӑтра, „наци тасалӑхӗшӗн" тӑрӑшам пек туса, истори ҫӳп-ҫапӗ ҫинче чаваланакан пурист е, чӑн пурнӑҫ мехелне уйламасӑр, ашшӗ-амӑшне палламасӑр, ракетӑ хӑвӑртлӑхӗпе пиншер ҫул малалла ыткӑнакан нигилист - мӗнле мӗскӗнӗн курӑнаҫҫӗ халь вӗсем! Пӗр медалӗн икӗ енӗ тенӗ пек, реализмран пиҫнӗ унашкал вӗҫкӗн шухӑшлӑ каппайчӑксем иккӗш те пӗрех-ҫке. Вӗри чир ҫунатлантарнӑ суя фантази те, демагогла сивӗ, чее „рашчут" та - пирӗн социализмла пурнӑҫӑн объективлӑ йӗркисемпе килӗшме пултарайман япаласем. Тукайпа Иванов аллӑ пилӗк ҫул ӗлӗкрехех ҫав икӗ йышши каппайчӑка та тивӗҫлипе питлесе тӑкнӑ. Поэтӑмӑрсем иккӗш пӗр ҫултах (1908), халӑхӑмӑрсен шӑпишӗн чутан-вартан пӑшӑрханса, хӑйсен програмлӑ сӑввисене ҫырнӑ. Эпӗ Тукайӑн „Националистсем" сӑввипе Ивановӑн „Хальхи самана" сӑвви ҫинчен калатӑп.

Раҫҫейри пӗрремӗш революци ҫӗнтерейменни кашни халӑхрах тӗрлӗрен социаллӑ сийсене ҫӗнӗрен хирӗҫтерсе янӑ. Либераллӑ буржуазипе унӑн юрӑҫисем, малтан пӑлхав ҫӗкленӗ халӑх майлӑрах юрланӑскерсем, часах улшӑннӑ - патша йӗркин сатрапӗсем майлӑ ҫаврӑнса ӳкнӗ.

Кӑлӑхах ҫав! Сӑр хуртран эс ан кӗт ырлӑх:

Сутӑнми, хӑватлӑ чунлӑ паттӑр кирлӗ! - тенӗ асӑннӑ сӑввинче Тукай. Иванов ҫав ӗҫлемесӗр пыл кӳпнӗ „сӑр хуртсене", хӑй халӑхӗн ренегачӗсене ҫапла питленӗ:

Анчах чӑваш хушшинче

Чунӗ хытнӑ ҫынсем те
Тапалана пуҫларӗҫ.
Тӑрса ҫапла каларӗҫ:
„Чаплӑ вырӑн тупасчӗ,
Часрах улпут пуласчӗ".
Тӗрлӗ ҫутӑ тӳмешӗн
Тӗнки тухать ав лешӗн;
Чӑвашла та калаҫмасть,
Тӑванне те астумасть:
Чӗри шӑнса кайнӑ ҫав,
Чӗрӗ виле пулнӑ ҫав.

Ҫапла ӗнтӗ, икӗ фронтра ҫапӑҫнӑ пек, национализмпа та, национал-нигилизмпа та пӗр танах кӗрешсе, Тукайпа Иванов чӑн-чӑн халӑх литератури тума тӑрӑшнӑ. Эпир, пур „измсенчен" чи пахине - коммунизма чунпа-чӗрепе йышӑннӑскерсем, ҫакна туятпӑр: гуманизмпа ирӗклӗх рыцарӗсем, пирӗн аслӑ халӑх поэчӗсем паян пирӗнпе пӗр уран утаҫҫӗ. Эпир Ивановӑн вилӗмсӗр сӑмахӗсене илтсе хавхаланатпӑр:

Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере
Вӑйли ҫук та этемрен.

Эпир Тукайӑн йыхравлӑ, уҫӑ сассине илтетпӗр: „Сывӑ пултӑр халӑх литератури! Сывӑ пултӑр тӑван чӗлхе... Телейлӗ ҫул!"[1]

---

[1] Тукайӑн халӑх литератури ҫинчен вуланӑ лекцийӗсенчен (1910).

Хусан. - Хусан, 1965. - С. 226-232.